Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 5-мӗшӗнченпе тухать

ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ 2011 · ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ MMVIII · ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ MMIX

29 (7883) № * Юн кун, 2011 ҫулхи ака (апрель) уйӑхӗн 20-мӗшӗ * Хакӗ ирӗклӗ

## Тӑрӑшулӑхне кура хисеплеҫҫӗ



***Любовь Маркияновна Григорьева медицина училищинчен вӗренсе тухса сывлӑх хуралӗнче ӗҫлеме тытӑнни пӗрремӗш ҫул мар ӗнтӗ. 1990 ҫултанпа вӑл Ҫатракассинчи фельдшерпа акушер пунктӗнче тӑрӑшать. Тӗрӗссипе вӑл Ҫатракассипе Ҫӗньял Хуракасси ялӗсенче пурӑнакан 835 ҫыннӑн сывлӑхӗшӗн ответлӑ пулса тӑрать.***

***– Унччен медицина пулӑшӑвӗ илме килекенсене йышӑнма, кирлӗ пулӑшу пама майсем ҫитсех те каймастчӗҫ. Кабинетсем те хӗсӗкрехчӗ. Иртнӗ ҫул вара фельдшер пунктне тул енчен те, шал енчен те капиталлӑ юсанӑ кӑна мар, сывату учрежденийӗн лаптӑкне те пысӑклатма май килчӗ, – каласа парать Любовь Маркияновна.***

***Чирлисене, сиплеме пыракансене фельдшерпа акушер пунктӗнче йышӑннипе, пулӑшу панипе кӑна ҫырлахмасть хастар ӗҫчен. Вӑл вӑрҫӑ участникӗсем, вилнӗ салтаксен тӑлӑх арӑмӗсем патне килӗсене те тӑтӑшах тухса ҫӳрет, вӗсен сывлӑхӗсене тӗрӗслесех тӑрать, сӗнӳсемпе те пулӑшать.***

***Кунсӑр пуҫне тата территорире пӗр ҫула ҫитмен ачасем 12. Вӗсем патне те ҫитме манмалла мар. Ҫамрӑк амӑшӗсен кӗтнӗ хӑни вӑл кирек хӑҫан та. Мӗншӗн тесен вӗсене тепӗр чухне специалистӑн ку е вӑл сӗнӗвӗ тем пекех кирлӗ.***

***Фельдшерӑн ӗҫӗ ҫӑмӑл мар. Хӑш чухне ҫӗр варринче те чӗнсе каякансем тупӑнаҫҫӗ. Турткалашса тӑмасть Л.М. Григорьева. Ҫын чирлӗ, аптӑрать пулсан ӑна вӑхӑтра пулӑшу парасах пулать. Ҫавӑнпах хисеплеҫҫӗ те ӑна ял ҫыннисем, ырӑпа кӑна асӑнаҫҫӗ.***

*В. ШАПОШНИКОВ*

*сӑн ӳкерчӗкӗ.*

## Наци сывлӑхӗ пӗрремӗш вырӑнта

**Раҫҫейре**

***«Единая Россия» партин Чӑваш регион уйрӑмӗ пӗлтернӗ тӑрӑх Чӑваш Республики сывлӑха сыхлассине модернизацилессин федераллӑ программине хутшӑнса юлашки икӗ ҫул хушшинче 4,5 миллиард тенкӗ илнӗ.***

Ҫитес икӗ ҫулта Раҫҫейӗпе патшалӑхӑн тата муниципаллӑ сывату учрежденийӗсен 40 ытла процентне юсама палӑртаҫҫӗ. Кун пирки «Единая Россия» партин лидерӗ, РФ Правительствин Председателӗ Владимир Путин медицина ӗҫченӗсен Пӗтӗм Раҫҫейри форумӗнче пӗлтернӗ. Вӑл палӑртнӑ тӑрӑх 2011–2012 ҫулсенче сывлӑха сыхлассин патшалӑх тата муниципаллӑ 18 пин сывату учрежденийӗнчен 8 пине яхӑн учреждениене юсама пӑхса хунӑ. Кунпа пӗрлех пуҫлана строительство ӗҫӗсене вӗҫлес пулать.

«Сывлӑха сыхлас системӑна 100 пин единица ытла хальхи медицина техникипе тивӗҫтермелле. Вӗсен номенклатури питӗ анлӑ – вӑтамран пӗр пин тӗслӗхпе модель таранах. Ҫав тӗллевпе икӗ ҫул хушшинче федераллӑ бюджетран 100 миллиард тенкӗ уйӑратпӑр. Ку вӑл медицина техникин рынокӗн хальхи ҫулталӑкри калӑпӑшӗн ҫурри чухлӗ пулать»,– ӑнлантарса панӑ Владимир Путин.

Патшалӑх умӗнче тӑракан тӗп задачӑсенчен пӗри – граждансен ӗмӗрне вӑрӑмлатасси. Апла пулсан ҫынсене медицина пулӑшӑвӗ парассин пахалӑхне те лайӑхлатмалла, тухтӑр профессийӗн сумне те хӑпартмалла. Кунпа пӗрлех парти лидерӗ тухтӑрсене ӗҫ укҫи тӳлессин фондне 30 процент ытла ӳстерессине те пӗлтернӗ.

Чӑваш Республики Раҫҫейре чи пӗрремӗшсем шутӗнче сывлӑха сыхлассине модернизацилессин хайӗн программине хӳтӗлеме пултарнӑ.

Нумай миллион укҫа-тенкӗ Чӑваш Енри районсемпе хуласенчи сывлӑх сыхлавӗн учрежденийӗсене модернизацилеме, ҫӗнӗ оборудованисем, медикаментсем кӳрсе килме каять. Пирӗн регион валли уйӑракан укҫа-тенкӗ пӗтӗм сывлӑх сыхлавне модернизацилеме май парӗ. Ку вара чӑннипех те кирлӗ.

## Чӑваш Республикин Правительство пуҫлӑхӗ пирӗн районта пулчӗ

Иртнӗ эрне кун пирӗн района Чӑваш Республикин Правительство пуҫлӑхӗ О.В. Макаров килсе кайрӗ. Вӑл «Моргаушский» сӗт-ҫу ҫавочӗ» чикӗллӗ яваплӑхлӑ обществӑра пулчӗ. Предприяти директорӗ А.В. Воробьев кунти ӗҫ-хӗлпе паллаштарчӗ. «Моргаушский» сӗт-ҫу завочӗ» тата «Путь Ильича» чикӗллӗ яваплӑхлӑ обществӑсен харпӑрлӑх хуҫи О.А. Дельман коллективӑн малашнехи тӗллев-задачисемпе паллаштарчӗ. Кӑҫал «Путь Ильича» чикӗллӗ яваплӑхлӑ обществӑра 1008 пуҫ вырнаҫмалӑх ӗне ферми тума палӑртаҫҫӗ. Ҫавӑн пекех сӗте тирпейлесе унтан ытти продуктсем хатӗрлемелли цех тумалла. Олег Витальевич предприятин малашлӑх ҫулне ырларӗ. Ҫак ҫӗнӗлӗхсене пурнӑҫа кӗртни туса кӑларакан продукцин ассортиментне пуянлатма тата вӗсен пахалӑхне лайӑхлатма пулӑшать.

Район администрацийӗн пуҫлӑхӗ Ю.А. Иванов ял хуҫалӑх предприятийӗсемпе асӑннӑ чикӗллӗ яваплӑхлӑ общество хушшинчи ҫыхӑнӑва татах та лайӑхлатас енӗпе ӗҫлениме палӑртрӗ. Сӗт-ҫу завочӗн малашне сӗт паракансемпе вӑхӑтра татӑлас енӗпе тивӗҫлӗ мерӑсем йышӑнмалли ҫинчен каларӗ.

Л. ПАВЛОВА.

**Районта**

## Паян – информаци кунӗ

Районта паян черетлӗ информаци кунӗ иртет. Унӑн теми – Чӑваш Республикинче сывлӑха сыхлассине модернизацилессин 2011–2012 ҫулсенчи программи ҫинчен; Чӑваш Республикин «Чӑваш Республикинче нумай ачаллӑ ҫемьесене ҫӗр участокӗсем уйӑрса парасси ҫинчен» Саккунне пурнӑҫа кӗртесси ҫинчен; ялсене тирпейилем кӗртес тата ҫак ӗҫе граждансене активлӑ хутшӑнтарас тӗлӗшпе вырӑнти хӑй тытӑмлӑх органӗсемпе территорири хӑй тытӑмлӑх органӗсем умӗнче тӑракан задачӑсем ҫинчен.

Республикӑран килекен тата районти ответлӑ ӗҫченсем Турай, Муркаш, Мӑн Сӗнтӗр, Ярапайкасси, Ярославка, Ҫатракасси ял тӑрӑхӗсене ҫитсе администраци ӗҫченӗсемпе тӗл пулаҫҫӗ, вӗсен территорийӗсенче вырнаҫнӑ ял хуҫалӑх предприятийӗсен, сывату учрежденийӗсен, шкулсемпе ача сачӗсен ӗҫӗ-хӗлӗпе паллашаҫҫӗ.

Хамӑр инф.

**2011 ҫул – Космонавтика ҫулталӑкӗ**

## Ентеш космонавтӑн палӑкне тума

Районта Раҫҫей космонавтикин кунне халалланӑ мероприятисем малалла пыраҫҫӗ. Вӑрҫӑпа ӗҫ ветеранӗсен районти канашӗ район хаҫачӗ урлӑ пирӗн паллӑ ентешӗмӗре, СССР космонавт летчикне, икӗ хут Совет Союзӗн Геройне А.Г. Николаева халалласа туса лартакан скульптура палӑкӗ валли укҫа пухма чӗнсе каланӑччӗ. Ку информацие район администрацийӗн официаллӑ сайчӗ ҫине те вырнаҫтарнӑ.

Ҫак йыхрав асӑрханмасӑр юлмарӗ. 4 ял тӑрӑхӗнчи ветерансен ҫийӗнчех палӑк валли укҫа пухассине йӗркелене. Чуманкасси ял тӑрӑхӗнчи ветерансен канашӗ ҫак вӑхӑта 7958 тенкӗ, Турай ял тӑрӑхӗнчи Анаткассинчи ветерансен канашӗ 3200 тенкӗ, Уйкас Янасал ял тӑрӑхӗнчи ветерансен канашӗ 1050 тенкӗ, Мӑн Сӗнтӗр ял тӑрӑхӗнчи ветерансен канашӗ 700 тенкӗ пухнӑ. Пӗтӗмпе 12908 тенкӗ пухӑннӑ. Ку ӗҫ малалла пырать.

Хамӑр инф.

**Уйӑхлӑх**

## Массӑллӑн пуҫӑнма вӑхӑт

Юр ирӗлнӗ май хӗлӗпе юр айне пулса пынӑ пӗтӗм ҫӳп-ҫап, тасамарлӑх ҫиеле тухать. Ҫавӑнпа тавралӑха тирпей-илем кӗртес, урамсемпе ялсене, обществӑлла вырӑнсене тасатас, йывӑҫсем латса хӑварас енӗпе ҫулленех ҫуркунне уйӑхлӑх иртересси йӑлана кӗнӗ ӗнтӗ. Кӑҫал вӑл районта апрелӗн 6-мӗшӗнчен тытӑнса майӑн 8-мӗшӗччен пырасси пирки хаҫатра пӗлтернӗччӗ.

Апла пулин те хальлӗхе ытларах ҫӗрте тасалӑхпа тирпейлӗх енӗпе ҫине тӑрса ӗҫлени, ҫак ӗҫсене массӑллӑн пуҫӑнни сисӗнмест. Ҫавӑнпах ӗнтӗ ку ыйтӑва район администрацийӗн пуҫлӑхӗ эрнесерен тунти кунсенче райадминистрацийӗн ответлӑ ӗҫченӗсемпе, федераллӑ органсен ертӳҫисемпе иртерекен канашлура та хускатрӗ. **Мӑн кун умӗн апрелӗн 22–23-мӗшӗсенче районта пӗтӗмӗшле санитарипе экологи тасалӑхӗн кунӗсене иртерме пӑхнӑ.**

Тӗрӗссипе тасалӑхпа тирпейлӗх ыйтӑвӗ эрнелӗх е уйӑхлӑх ӗҫ ҫеҫ мар. Кунсерен тата кашниех хутшӑнма тивӗҫ ку мероприятисене. Хамӑрӑн тавралӑх илемӗшӗн хамӑрах ответлӑ пулса тӑратпӑр. Вӑл никама та мар, хамӑрах кирлӗ.

Тӗрлӗ ҫӳп-ҫапа ҫул айккисене, айлӑм вырӑнсемпе ҫырма-ҫатрана, кювета силлесе хӑваракансем тӗл пулаҫҫӗ. Кун пеккисенчен милици сотрудникӗсем те ҫирӗпрех ыйтни кирлӗ. Тавралӑха варалакансен хӑтланӑвӗсене никамӑн та курмӑш пулмалла мар. Администрацивлӑ протоколсем ҫырни, кун пек ҫынсене граждансен пухӑвӗсенче намӑслантарни ытлашши пулмӗ.

В. ШАПОШНИКОВ.

## Аслӑ Ҫӗнтерӳ кунне хатӗрленсе

**Кӑҫал Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑра Ҫӗнтерӳ тунӑранпа 66 ҫул ҫитет. Ҫак уява хатӗрленсе иртерессипе пурнӑҫламалли ӗҫсене йӗркелесе пырассипе районта йӗркелӳ комитетне туса хунӑ, ӗҫ планне ҫирӗплетнӗ. Ӑна район администрацийӗн пуҫлӑхӗн ҫумӗ, йӗркелӳпе кадрсен, право енӗпе тивӗҫтерессин тата вырӑнти хӑй тытӑмлӑх органӗсемпе ӗҫлекен пайӗн пуҫлӑхӗ Л.Ю. Тарасова ертсе пырать. Ҫак кунсенче комитетӑн черетлӗ ларӑвӗ пулнӑ. Унта Ҫӗнтерӳ уявне хатӗрленсе иртерессипе кая юлмасӑр татса памалли ыйтусене сӳтсе явнӑ.**

Социаллӑ хӳтлӗх пайӗн пуҫлӑхӗ Н.П. Петрова пӗлтернӗ тӑрӑх районӗпе ҫак вӑхӑта Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑн 101 ветеранӗ пурӑнать. Вӑрҫӑра вилнӗ салтаксен тӑлӑх арӑмӗсем 399, тыл ӗҫченӗсем 1287 ҫын. Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑ ветеранӗсен пурӑнмалли условийӗсене тӗрӗслесе тухнӑ, япӑх условисенче пурӑнакансене хваттерпе тивӗҫтермеллисен учетне илнӗ. Ку ӗҫ халӗ те пырать. Ҫурт-йӗр условийӗсене лайӑхлатмаллисен шутне кӗртнӗ 201 ветеранпа вӑрҫӑра вилнӗ салтак мӑшӑрӗсенчен 147-шӗ свидетельствӑсем илнӗ, пурнӑҫ условийӗсене лайӑхлатнӑ.

Хатӗрленӳ ӗҫӗсем пирки ҫавӑн пекех район администрацийӗн культура тата архив ӗҫӗсен пайӗн пуҫлӑхӗ А.Е. Андреева, вӗрентӳ, ҫамрӑксен политики тата физкультурӑпа спорт пайӗн пуҫлӑхӗ З.Ю. Дипломатова каласа панӑ. Районти 11 парикмахерскинче уяв умӗн вӑрҫӑ ветеранӗсене, салтаксен тӑлӑх арӑмӗсемпе тыл ӗҫченӗсенне ҫӳҫӗсене тӳлевсӗрех касассине йӗркелеҫҫӗ. Медицина учрежденийӗсенче вӗсен комплекслӑ медицина тӗрӗслевне иртерӗҫ.

Муркаш ял тӑрӑхӗн пуҫлӑхӗ Н.И. Никитин ларура майӑн 9-мӗшӗнче митинг иртермелли планпа паллаштарчӗ.

Хамӑр инф.

**Конкурс**

## Хутшӑнма кӑмӑл тӑватӑр пулсан

Чӑваш Республикин Сывлӑха сыхлас ӗҫ тата социаллӑ аталану министерстви 2011 ҫулта республика территорийӗнче Пӗтӗм Раҫҫейри «Российская организация высокой социальной эффективности» конкурсӑн регион тапхӑрне иртерме палӑртать. Тулли информацие ЧР Сывлӑха сыхлас ӗҫ тата социаллӑ аталану министерствин ӗҫ условийӗсен сыхлавӗн тата экспертизин пайӗнче илме пулать. Телефонӗ: (8352) 62-10-46; «Охрана труда в Чувашской Республике» ятарлӑ сайт адресӗ: WWW.OT.CAP.RU. Ҫавӑн пекех районти социаллӑ хӳтлӗх пайне апрелӗн 28-мӗшӗччен пыма пултаратӑр.

**Ҫырӑнтару**

**Хаклӑ вулаканӑм!**

**Райхаҫата иккӗмӗш ҫур ҫултан илсе тӑма ҫырӑнтарас тапхӑр малалла пырать. Ҫырӑнтару хакӗ унченхиех – 191 тенкӗ те 70 пус (ултӑ уйӑха).**

## Водительсен черете çырăнмалла

Водитель удостоверенине улăштарас, водитель удостоверенийĕн дубликатне илес тесен черете çырăнмалла. Ятарлă курссем хыççăн экзаменсене ăнăçлă тытнисем, тĕнчери стандартлă водитель удостоверенине илес текенсем те çак адреспа черете "тăма" пултараççĕ: Шупашкар хули, Б. Хмельницкий урамĕ, 37-мĕш çурт, 102-мĕш пӳлĕм, «А» чӳрече. Телефон номерĕ: 8(8352)39-75-71.

Прокуратурăра

## Сире мăкăнь лаптăкĕ ан илĕрттĕр

Йĕрке хуралçисем халăх хушшинче наркотикпа усă курассине хирĕç кĕрешес ĕçре çине тăрса ĕçлеççĕ. Çавна май мăкăнь ешерекен лаптăксене тĕп тăваççĕ, унта иленнисене кусран вĕçертмеççĕ, айăплисене ответ тыттараççĕ. Акă çак кунсенче кăна суд наркотикпа сыхăннă пĕр ĕçе пăхса тухрĕ.

Маларах Шупашкар тата Хусан хулисен сучĕсенче айăпланнă, 1980 çулта çуралнă, нарколог патĕнче учетра тăракан (наркотикпа усă курнăшăн) арçынна Муркаш район сучĕ те айăплă тесе йышăнчĕ.

Вăл сентябрĕн 15-мĕшĕнче Малиновкăри «Дубрава» коллективлă садра 133,8 грамм чухлĕ чĕрĕ мăкăнь татса пухнă. Çак ӳсен-тăранра морфин пур. Асăрхарăр ĕнтĕ, пуçтарнă мăкăнь виçи те пĕчĕк мар. Çавна май РФ правительствин постановленийĕпе килĕшӳллĕн арçын пухнă мăкăнь пысăк виçеллĕ наркотик шутланать. Çапла вара саккуна пăхăнман çын РФ УК 228 статйин 1 пайĕпе пăхнă преступление тăвать.

Преступлени тунине йышăнакан вара ун чухнехи ĕç-хĕле çапларах ăнлантарса парать. Наркотикшăн тунсăхланăскер, хăй ĕçĕпе коллективлă сада кайса килмелли ӳтĕм тупса юлташне машинăпа Малиновка тăрăхне килсе кайма ыйтать. Машина водителĕ кĕтсе ларнă хушăра çакскер пуçа минретме пулăшакан ӳсен-тăрана пуçтарса килет. Уй куçлă, вăрман хăлхаллă теççĕ халăхра. Анчах та «Мак 2010» операцие ирттерекен йĕрке хуралçисем вĕсен çулне пӳлеççĕ, иккĕшне те шалти ĕçсен пайне илсе каяççĕ.

Çапла вара 2010 çулхи декабрь уйăхĕнче палăртнă кун вăл судларăвне пыман, çавăн пекех иккĕмĕш тата ытти йыхрава та хапăл туман. Саккуна пăхăнман арçын йĕрке хуралçисенчен тарса пытаннă. Ун тĕлĕшпе патшалăх айăплавçи Ю.М. Семенов çирĕп мера йышăнма ыйтнă. Çапла вара Муркаш тăрăхне иленнĕ наркомана шырава тăратнă. Йĕрке хуралçисем оперативлă ĕçленипе таркăна март уйăхĕнче тытса чарма май килнĕ. Саккуна пăсаканăн халĕ 3 çулталăк та 6 уйăхлăх колонире пулмалла пулĕ. Акă ăçта илсе çитерчĕ çамрăк арçынна усă курма юраман тĕрлĕ им-çампа туслашни.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

# «Байконурта» пуласса ĕмĕтленмен

2011 çул – Космонавтика çулталăкĕ



Вăхăт сисĕнмесĕрех иртет. Акă Юрий Алексеевич Гагарин «Восток» караппа çĕр туртăмне çĕнтерсе пуринчен малтан тĕнче уçлăхне тухнăранпа çур ĕмĕр хыçа юлчĕ. Кун уттинчен юлмасăр пырса çак тапхăрта Çĕр планета çинче пурăнакан 6,77 миллиарда яхăн çынран 510-шĕ кăна космос тĕпсĕрлĕхне «ура ярса пусма» хевте çитернĕ. Вĕсенчен 108-шĕ пирĕн çĕр-шывра çуралса ӳснисем пулнăран Гагарин ĕçне малалла тăсакансем Раççейре ытларах пулни палăрать. Кусем – тĕнче уçлăхне тухнисем. Вĕсене Гагарин лаптăкĕнчен космоса ăсатакансем вара çĕршерĕн мар, пиншерĕн.

Иртнĕ уйăхра Муркаш енре Чăваш Республикинчен тухнă офицерсен юлташлăхĕнче тата Мускав регионĕнчи «Тăван çĕршыв ывăлĕсем» общественла организацире тăракан ентешсем пулчĕç. «Тыл çирĕп пулсан пире те службăра çăмăлрах», – терĕ Çаранçырминче çуралса ӳснĕ С. Иванов подполковник.

Офицерсем çав кун Муркашри вăтам шкулта, районцентри лицейра тата Çатракассинчи вăтам шкулта пулса тĕл пулусем ирттерчĕç. Ентешлĕх ушкăнĕн ертӳçипе Эрик Васильевич Васильев полковникпа эпĕ шăпах Çатракассинче тĕл пултăм.

Сăмах май, Э. Васильев 1946 çулхи пуш уйăхĕн 2-мĕшĕнче Вăрнар районĕнче çуралнă. Тивĕçлĕ çар службине пурнăçланă хыççăн офицера вĕренĕ каччă хăйĕн тивĕçсене пурнăçланă чух Муркаш районĕнчи Çатракассинче çуралса ӳснĕ Людмила Лазаревна Николаевăпа çемье çавăрнă. Çапла чăваш йăлийĕркипе полковник çав кун хунькассинче пулса кунти пурнăçпа паллашрĕ, тăванĕсен аллисене чăмăртарĕ.

Çар çынни приказпа пурăнать. 1987 – 1991 çулсенче чăваш каччи «Байконур» космодромра Тĕп çар строительство управленийĕн политика пайĕн пуçлăхĕн çумĕ, пай ертӳçи пулса службăра тăрать.

– Ю. Гагарин 50 çул каялла космоса вĕçсен пурнăç мана шăпах «Байконура» илсе çитерет тесе шутламан. Анчах çапла пулса тухрĕ. Çĕр-шыв мана çавнашкал шанăç панăшăн эпĕ савăнатăп кăна. Хам тивĕçе пур çĕрте те туллин пурнăçлама тăрăшнă. Паянхи çамрăксене те çавнах сĕнетĕп. Хăвăр тăрăшсан сире асăрхĕç. Çĕр-шыв сыхлавне тăрас текенĕн вара спортпа уйрăмах çывăх пулмалла. Çирĕп арçын çеç хамăр атте-аннесемпе шăллăм-йăмăксене шанчăклă хӳтĕлеме пултарать, – терĕ ачасем умĕнче шкула «Байконура» асилтерекен сăн ӳкерчĕксемпе асăнмалăх парнесем парса Эрик Васильевич.

Офицер калаиннчен çакă паллă пулчĕ. Космоса çĕкленмелли çул çĕр çинче ырă ĕçсем туничен, тăван шкулта тăрăшса вĕреннинчен, сывă пурнăç йĕркине çирĕп тытнинчен пуçланать. Ю. Гагарин космоса вĕçсен 15 çулхи Эрик «Байконур» пирки шутлама та пултарайман. 300 километр ытла çӳллĕшĕнче 108 минут... «Кашни арçын ача пекех манăн ĕмĕтре те унта çĕкленесси пулнă. Вăл пирĕншĕн юмах пек пулнă пулсан та эпир çав вăхăта хатĕрленнĕ. Ăна валли пирĕн 3 ĕмĕт-тĕллев пулнине паян та астăватăп. Вĕсем: çĕр-шыва юрăхлă пуласчĕ, ăна тивĕçлĕ хӳтĕлесчĕ, космоса вĕçсе килесчĕ. Уçлăхах çĕкленейменĕм пулсан та ачалăхра ума лартнă пур тĕллеве те пурнăçларăм», – терĕ шкул ачисемпе пĕрле сăн ӳкерттерме тăнă май ăшă та çирĕп кăмăллă арçын.

**А. БЕЛОВ.**

**Сăн ӳкерчĕкре: ЧР Çар комиссариачĕн Муркашпа Элĕк районĕсенчи пай пуçлăхĕ В.Е. Андреев (сулахайри), Çатракассинчи вăтам шкул директорĕ В.А. Прокопьев, стратегиллĕ пĕлтерĕшллĕ ракета çарĕсен хĕллехи спорт тĕсĕсен тĕп тренерĕ В.И. Андреев тата «Байконур» космодромăн çарпа политика пайĕн пуçлăхĕ пулнă Э.В. Васильев.**

# Паян та тĕрлет, тĕртет, вулать



***– Мĕнле пурăнатăр-ха, кинеми?***

***– Лайăх пурăнатăп. Тепĕр çакăн чухлĕ темле пурăнмалла, – ăшшăн кулса калаçса кĕтсе илчĕ 90 çулхи Е.В. Иванова. Москакассинчи нумай хваттерлĕ çуртра куçни нумай пулмасть-ха унăн. Граждансене кивĕ аварилле ларутăрури кăлармалли çинчен калакан программăпа килĕшӳллĕн тивĕçтерчĕ район администрацийĕ Елена Васильевнăна çĕнĕ хваттерпе. Апрелĕн 17-мĕшĕнче хăйĕн сумлă юбилейне çĕнĕ хваттерте паллă туса 10-мĕш теçеткене пĕр утăм турĕ вăл.***

Етĕрне районĕнчи Кăмăккассинче нумай ачаллă çемьере çуралнă Евлен. Ашшĕ-амăшĕ ĕçчен пулнăран ачисем те мĕн пĕчĕкренех ĕç çумне çыпăçса ӳснĕ.

– Атте хурт-хăмăр тытатчĕ. 30 вĕллеччĕ пирĕн. Çĕлеме те ăстаччĕ вăл, – паянхи пек астăвать 90 çулхи кинемей ашшĕпе амăшне.

Çĕвĕ машинине ачисене тыттарасшăнах марччĕ ашшĕ. Анчах та 8 çулхи Евлен çĕлеме вĕренчĕ-вĕренчех. Килте никам çук чухне кĕрлеттеретчĕ çеç çĕвĕ машинине.12 çулта хăех çĕпата туса тăхăнчĕ. Тепĕр икĕ çултан – 14-ра – ашшĕпе тан хăма çурма пуçларĕ. 12 çултах алла çава тытрĕ, утă çулма пуçларĕ. 15 çулта вара вăл аслисемпе танах çулатчĕ.

Çирĕп, ĕçчен çемьене инкек килсе çапать. Евлен 6 класра вĕреннĕ чухне вĕсем тĕпĕ-йĕрĕпех çунса каяççĕ. Çавăнпах хĕр ача Çухрари 7 класлă шкул хыççăн малалла вĕренме каяймасть. Шкулта питĕ лайăх вĕреннĕ хăй.

Виçĕ пиччĕшĕ унăн учитель пулнă. Шăп пушар хыççăн пиччĕшĕ ăна хăй ĕçлекен гимназие илсе кайса кăтартнă.

– Пушарта тăхăнмалли те нимĕн те юмарĕ. Урара пысăк пуслă çăпата, сӳсленсе кайнă тăла пулнăран ватăнса гимнази патне пыма та намăслантăм, – аса илет паян кинемей.

Вĕренме кайма шутламарĕ вара хĕр ача. 7 класс хыççăн колхозра ĕçлеме пуçларĕ. Пултарулăхне кура ĕнтĕ ăна тӳрех столовăй заведующине лартаççĕ.

3 çул хыççăн вара вăл Советскинчи больницăна санитаркăна ĕçе кĕрет. Нумай та вăхăт иртмест, ăна медсестрана лартаççĕ. Шупашкарта медсестрасен 1 уйăхлăх курсне пĕтерет. 1943 çултан пуçласа 1949 çулччен инфекци уйрăмĕн медсестринче ĕçлет. Больница хыççăн колхоза ĕçлеме тухать.

1949 çулта хăйсенчен пĕр кил урлă пурăнакан çамрăка качча тухать. Федор ун чухне Нискассинче çул çинче ĕçлетчĕ. Унти больницăра вырăн çуккипе çамрăк арăм мăшăрĕпе пĕрле çул çинче ремонтер пулса ĕçлет. Мĕн тивĕçлĕ канăва тухиччен, 1962 çулта Москакассине куçса килеççĕ. Кунта çул тунă çĕрте ĕçлеççĕ.

Шăпа тени вăл вăхăтри пинпин çын пекех Елена Васильевнăна та çирĕплĕх енчен тĕрĕслерĕ. Мăшăрĕнчен 6 ачапа тăрса юлчĕ вăл. Шăп 45 çул каялла çул çинче ĕçленĕ чухне инкекре Федор Ивановичăн пурнăçĕ татăлать. Аслă хĕрĕ Людмила та ун чухне 8 класра кăначчĕ-ха.

Пурнăçа саплаштарса пыма нумай ача амăшне шăпах çĕлеме-çыхма пĕлни пулăшнă. Ачисене тумтирне йăлтах хăй çĕлесе, çыхса, тĕртсе паратчĕ.

– Ачасене те лартса çав ĕçех тутараттăм, – тет паян Елена Васильевна. – Мĕншĕн-мĕншĕн те çакăншăн савăнатăп: ман ачасем хампа тавлашса курман. Йĕркеллĕ ачасем пулчĕç.

Аслă хĕрĕ Людмила Федоровна аслă пĕлӳ илнĕ хыççăн Москакасси шкулĕнче ачасене вырăс чĕлхипе литературине вĕрентрĕ, 4 çул районти вĕрентӳ пайĕнче ĕçлерĕ. Унтан мĕн тивĕçлĕ канăва тухиччен Чăваш Республикин Вĕрентӳ министерствинче тĕп специалистра вăй хучĕ.

Иккĕмĕш хĕрĕ те аслă хĕрĕ çулĕпех кайрĕ, Эльвира Федоровна та вырăс чĕлхипе литературин учителĕн дипломне илчĕ. Москакасси шкулĕнче вожатăйра ĕçлерĕ малтан. Унтан вăл та аппăшĕ пекех карьера картлашкипе çӳлелле хăпарса кайрĕ: комсомол райкомĕнче ĕçлерĕ. Парти райкомĕнче инструктортан пай пуçлăхне çитрĕ, 3-мĕш секретарь таран ӳссе нумай çул унта ĕçлерĕ. Районти ачасен пултарулăх çуртне ертсе пычĕ. Мĕн тивĕçлĕ канăва тухиччен район администрацийĕнче ĕçлерĕ.

Евлампия Федоровнăпа Тамара Федоровна пурнăç çулне стройкăпа çыхăнтарчĕç. Пĕри Шупашкарта ЖБК-ра контролер пулса ĕçлерĕ. Тамара та строительсен техникумĕ хыççăн унтах ĕмĕрлерĕ. Иккĕшĕ те паян тивĕçлĕ канура.

Кĕçĕннисенчен вара, йĕкĕрешсенчен, Галина Федоровна та хăй умĕнхи аппăшĕсем пекех стройкăра, унтан шкулта лаборанткăра ĕçлерĕ. Халĕ Яракра пурăнать. Кирилл Федорович вара – Чăваш Республикин Шалти ĕçсен министерствин системин пенсионерĕ.

6 ача çуратса ӳстернĕ 90 çулхи Елена Васильевнăн паян 6 мăнук тата 6 прамăнук. Паян вăл хаçат та вулать, телевизор та пăхать. Тĕнчере мĕн пулса иртнине пĕлес килет-çке.

– Кашни çуппе лайăх куратăп, – тет вăл.

Çулне кура мар витĕр куракансккер паян та тĕртет, тĕрĕ тĕрлет.

Ĕçлеме те 76 çула çитиччех ĕçленĕ. Тивĕçлĕ канăва тухсан тепĕр 26 çул Муркашри хатĕрлев кантурĕнче хатĕрлевçĕ пулса тăрăшрĕ.

Хăйĕн вăрăм ĕмĕрĕн вăрттăнлăхне вара Елена Васильевна çакăнта курать:

– Ĕçлемелле, çынна юратмалла, – тет вăл.

**Вĕçĕнче хушса калани.** Чăваш Республикин Сывлăх сыхлавĕ тата социаллă аталану министерствин пирĕн районти социаллă хӳтлĕх пайĕн ертӳçи Н.П. Петрова, районти ветерансен Канашĕн ертӳçи М.В. Виноградова тата В.А. Любимова Е.В. Ивановăна 90 çулхи юбилейпа киле кайсах саламларĕç, ĕç ветеранне нумай-нумай çул пурăнма ырлăх-сывлăх сунчĕç.

**Л. ПАВЛОВА.**

Викторина

## Çĕнтерӳçĕсем паллă

Апрелĕн 12-мĕшĕ Пĕтĕм тĕнчери космонавтика кунĕ пулнă май хаçат редакцийĕ шкул ачисем валли викторина пуласси пирки пĕлтернĕччĕ. Викторинăна хутшăнакансем йышлă пулчĕç. Ачасем анлă тавра курăмлă пулни курăнчĕ. Тĕрĕс те тулли хуравсем хушшинчи ĕçсене суйласа илме вара çăмăлах пулмарĕ. Ĕçе сăн ӳкерчĕксемпе илемлетни те ачасен тăрăшулăхĕ пиркиех калать. Викторинăра уйрăмах палăрнă ĕçсен авторĕсем: В. Тихонова (Кашмашри тĕп шкулти 6-мĕш класс вĕренекенĕ), Ю. Ильина (Юнкăри вăтам шкулти 9-мĕш класс вĕренекенĕ), В. Николаева ( Чуманкассинчи тĕп шкулти 3-мĕш класс вĕренекенĕ), С. Макаров (Чуманкассинчи тĕп шкулти 3-мĕш класс вĕренекенĕ), П. Павлов (Муркашри вăтам шкулти 9-мĕш класс вĕренекенĕ), Н. Мудукова (Муркашри вăтам шкулти 7-мĕш класс вĕренекенĕ). Çĕнтерӳçĕсем çитес вăхăтра Хисеп хучĕсемпе асăнмалăх парнесене тивĕçĕç. Пирĕн пата çыракан ачасене малашне те район хаçачĕпе тачă çыхăну тытма, вĕренӳре ăнăçусем тума, çĕр-шывшăн усăллă çынсем пулма сунас килет.

**А. ТИХОНОВ,**
**тĕп редактор.**

Объявление

Я, собственник земельной доли Дементьев Виталий Григорьевич, объявляю о выделении земельного участка в счет земельной доли общей площадью 1,58 га, расположенного на территории землепользования бывшего СПК «Новая Юнга» Моргаушского района Чувашской Республики, Юнгинского сельского поселения, участок расположен в юго-восточной части кадастрового квартала 21:17:080901.

Все претензии принимаются в течении месяца после выхода объявления в администрации Юнгинского сельского поселения.

